76-217



З. Вахрамеева

# Пирĕн салам

КОНТРОЛЬНЫЙ
ЭКЗЕМПЛЯР

З. ВАХРАМЕЕВА

# Пирĕн салам

*(Литературăпа музыка композицийĕсем.)*



Чăваш кĕнеке издательстви
Шупашкар — 1976




# Тавтапуç, юратнă парти

## (Литературăпа музыка композицийĕ)

1 пионер: Çут хĕвел ялкăшса хăпарать,
Çĕршыв ылтăн тумпа ялтăрать.
Ĕç юрри шăранать таврара,
Иксĕлми вăй-хăват халăхра.

2 пионер: Çĕршыв чапĕ ялан сарăлать,
Çутă ĕмĕт çĕклет кăмăла.
Ирĕк халăх хăюллăн утать,
Тăван парти, санпа малалла.

*(В. Давыдов-Анатри.)*

3 пионер: Мухтавлă аслă Парти хĕвеллĕ ялавла
Ертсе пырать хăватлăн пире малтан мала.

*(А. Лукин.)*



# Чыс та мухтав сана, юратнӑ учитель!

### (Учительсене саламлани)

1 пионер: Учитель! Юратнӑ учитель!
Сире уяв ҫитнӗ ятпа пурне те
Пурте: пионерла салам!
2 пионер: Учитель! Савнӑ учитель!
Паян — сан уяву!
Пӗтӗм тӗнче умне ҫӗкленчӗ
Халь сан чапу та мухтаву.
3 пионер: Учитель! Эсӗ атте маншӑн пултӑн,
Тыттартӑн алла кӗнеке, кӑранташ,
Ултавсӑр, таса, ытарми кӑмӑлу сан
Нихҫан тухас ҫук ман чунран, асӑмран.



# Эс—çӗр ăсти! Эс—çӗр хуçи!

## (Колхозниксене саламлани)

Ертсе пыракан: Ялхуçалăхӗнче ӗçлекенсем: колхоза ертсе пыракансем, агрономсем, механизаторсем, выльăх-чӗрлӗх пăхакансем, бригадирсем, уй-хир ӗçченӗсем, сире уяв çитнӗ ятпа пурне те

Пурте: п и о н е р л а  с а л а м!

1 пионер: Тинех уйри ӗçсем вӗçленчӗç!
Ӗçне кура — сан уяву:
Эс савăн та паян, мухтан та.

1 ушкăн: Эс — çӗр ăсти!

2 ушкăн: Эс — çӗр хуçи! *(Н. Евстафьев.)*

2 пионер: Савăнать Тăван çӗршывăм уяв çитнӗ май.
Чапа тухнă хӗрӗ-ывăлӗ унăн пит нумай.

3 пионер: Вӗсем йышлăн, ăмăртуллăн ӗçлесе хастар,
Турӗç ӳсӗм хыççăн ӳсӗм, кӳчӗç пархатар.




# Ленинла комсомол

## (Литературăпа музыка композицийĕ)

1 комсомолец: Пĕр хыпрĕ, пĕр ялкăшрĕ çулăм,
Асрах-ха вунсаккăрмĕш çул.
Вутра çуралса, комсомолăм,
Сана парти пачĕ кунçул. *(В. Урташ.)*

1 ушкăн: Ленинла комсомол —
2 ушкăн: пĕтĕм çамрăк чĕри.
1 ушкăн: Ленинла комсомол —
2 ушкăн: çĕнтерӳçĕ.
1 ушкăн: Ленинла комсомол,
2 ушкăн: вăй-халу сан вĕри,
Пурте: Тусусем çавăнпа хисеплеççĕ.
2 комсомолец: Пирĕн çамрăклăх илемĕ,
Пирĕн савăнăç хĕлхемĕ
Комсомолăн чĕринче,
унăн туслă йышĕнче. *(И. Малкай.)*



# Октябрь—ирĕк, мир, телей!

## (Литературăпа музыка композицийĕ)

1 вулакан: Паян уяв, çĕршыв уявĕ,
Юнпа-тарпа тупнă уяв.
Октябрьте Ильич пилленĕ
Çав ялава, çак ырлăха. *(В. Урташ.)*

2 вулакан: Октябрь чăпĕ ĕмĕр çиçĕ,
Шав тĕлĕнтерĕ çынсене.
Октябрьтен этемлĕх виçĕ
Кунçулăн хурçă утăмне. *(С. Шавли.)*

3 вулакан: Саламлатпăр мухтавлă Октябрь кунне.
Ун хĕвелĕ çутатрĕ мĕнпур тĕнчене.
Çĕршывра çуркунне! Чĕрере çуркунне!
Ырлăхне халалларĕ çĕршыв çынсене!

4 вулакан: Шăранса çĕкленет юрă ман чĕремре,
Чаплă ĕмĕр çинчен чаплă юррăм пур ман.
Халиччен çын курманччĕ кун пек ĕмĕре;



# Совет Конституцийĕ — пирĕн ялав!

### (Литературăпа музыка композицийĕ)

1 вулакан: Умра хитре çанталăк кунĕ,
Умра хĕвел шевли сикет.
Умра ирĕк халăх саккунĕ —
Илемлĕ ылтăн кĕнеке.

2 вулакан: Ăна уçсан, хаваслăх сачĕ
Çиçет пирĕн тавралăхра.
Телей уççи — ĕмĕр хăвачĕ
Сиксе кĕрет аллăмăра. *(Я. Ухсай.)*

3 вулакан: Тăван парти!
Эс чунтан тăран ĕççыннисемшĕн,
Ылтăн закон çыртăн эс вĕсемшĕн.
Аслă Конституцири сăмах
Саспаллисерен — ахах. *(С. Шавли.)*



# Салам сана, Ҫӗнӗ ҫул!

## (Литературӑпа музыка композицийӗ)

1 вулакан: Шурӑ юрӗ ҫурӗ, ҫурӗ,
Таврана шап-шурӑ турӗ.
2 вулакан: Ак татах иртрӗ тепӗр ҫулталӑк,
Килчӗ-ҫитрӗ каллех Ҫӗнӗ ҫул.
Эсӗ чаплӑ, ӑнӑҫлӑ ҫул пултӑн.
Юлтӑн эс ырӑпа асӑнмалӑх,
Манӑҫми кивӗ ҫул, сывӑ пул!
Пурте: Мухтав иртсе юлан ҫула! *(У. Мишши.)*
3 вулакан: Килех, ҫитмӗл ҫиччӗмӗш ҫул!
Кил, шанчӑк, кил, ӗмӗт, ҫунатлӑн,
Кил ҫирӗп вӑй-халлӑ, хӑватлӑ,
Хӑни те, хуҫи те эс пул.
4 вулакан: Килех, ҫитмӗл ҫиччӗмӗш ҫул!
Кил, мирлӗ телейлӗ ҫулталӑк.
Пире сӗн чунтан савӑнмалӑх



# Совет Çарĕ—мир шанчăкĕ

## (Литературăпа музыка композицийĕ)

1 вулакан: Тăван çĕршывăм, тав сана,—
Кăтартрăн эсĕ ху вăйна,
Аркатрăн пĕтĕм тăшмана.
Çĕклентĕн. Çĕнĕ самана
Пиллерĕн улăп халăхна.

*(В. Давыдов-Анатри.)*

2 вулакан: Хальччен тĕнче курман хăватлă Çар
Октябрь вутĕнче çуралчĕ.
Вăл пулчĕ пирĕн шанчăклă хуралçă,
Сыхларĕ пирĕн çĕнĕ пурнăçа.

3 вулакан: Чи тертлĕ, хаяр вăхăтра
Çуралтăн та эсĕ вутра,
Тăван çĕршыва тăшмансем тапăнсан,
Ялан çĕнтерсе тухрăн эсĕ вутран.

*(Н. Евстафьев.)*



# Тав сире, хаклă аннемĕрсем!

## (Литературăпа музыка композицийĕ)

1 вулакан: Пĕтĕм тĕнчери хĕрарăмсен пысăк уявĕ ячĕпе пурне те

Пурте: Пионерла салам!

2 вулакан: Йывăр пулнă авал хĕрарăм шăпи:
Пулнă виличчен вăл чăн пурнăç чури.

3 вулакан: Чăваш арăмне асапшăн
Ашшĕ-амăш çуратнă,
Ачаранпах хурлăх чулĕ
Мăйĕ çине çакнă.

4 вулакан: Хурт-кăпшанкă та çу кунĕ
Савăнса вĕçетчĕ,
Çутçанталăкшăн, хĕвелшĕн
Вăл та хĕпĕртетчĕ.

5 вулакан: Сан чĕрÿ анчах хĕн витĕр
Савăнăç пĕлместчĕ.



# Кайӑксем — пирӗн туссем

(Литература композицийӗ)

1 пионер: Ҫурхи хӗвел ҫуттӑн курӑнать,
Сӳнми хӗлхем сапса ӑшӑтать.
Татти-сыпписӗр кайӑк сассипе
Тӗнче юрласа янраса тӑрать.
2 пионер: Ҫут тӗнчен хӗвелӗ ӑшшӑн
Ылтӑн ҫутӑ сапнӑ май,
Тӗрлӗ кайӑк тӗрлӗ саслӑн
Чӗвӗлтетет-ҫке пӗрмай.
3 пионер: Ҫитрӗ те ӑш ҫуркунне,
Пур кайӑксем те таврӑнаҫҫӗ,
Улӑхсенче — курӑк ӑшне,
Вӑрмансенче — турат ҫине
Йӑва тумашкӑн тытӑнаҫҫӗ. *(И. Малкай.)*
4 пионер: Ҫунатлӑ пирӗн тусӑмсем,
Сире чунтан саватпӑр,



# Пирĕн космонавтсем

## (Литературăпа музыка композицийĕ)

1 вулакан: Апрелĕн вуниккĕмĕшĕ.
Совет çынни, ун харсăр офицерĕ
Çĕмрен пек улăхсан çӳл тӳпене,
Этем ăстăнĕ çак куна çĕклерĕ
Планетăсен виçесĕр тĕнчине. *(А. Аслут.)*

2 вулакан: Асран кайми уяв вăл пулчĕ...
Çуртсем çинче — пин-пин ялав.
Этемлĕх кĕтнĕ ĕмĕт тулчĕ,—
Çунатлă паттăра мухтав! *(В. Харитонов.)*

3 вулакан: Хĕвел шевли пек ТАСС хыпарĕ
Васкарĕ Çĕрĕмĕр тавра.
Россия ывăлĕ Гагарин
Çĕкленчĕ çăлтăрсем таран. *(С. Шавли.)*

4 вулакан: Çунатлă ĕмĕт пурнăçланчĕ —
Этемлĕх ĕмĕрсем кĕтни.
Сĕм уçлăха вĕçсе хăпарчĕ
Пĕрремĕш хут совет çынни.



# Ленин — сӳнми хӗвел

## (Литературӑпа музыка композицийӗ)

1 вулакан: Ленин!
Ун ячӗ — Аслӑ Пурнӑҫ.
Ҫак ят ҫӗр чӑмӑрӗ ҫинче
Нихҫан та сӳнмӗ — пурӑнӗ
Мӗнпур этемлӗх чӗринче. *(Н. Янкас.)*

2 вулакан: Чӗрере усратпӑр Ленина,
Хамӑрӑн телейшӗн тав туса,
Ӗмӗр-ӗмӗр Ленин пурӑнать,
Тӗнчене ҫутӑ ҫул кӑтартса. *(Н. Сандров.)*

3 вулакан: Ленин! Эс пирӗн ҫамрӑклӑх, хаваслӑх,
Пирӗн — чӗре, пирӗн — телей,
Эс коммунизм, эс пуласлӑх,
Эс ӗмӗрех — пирӗн хӗвел. *(И. Малкай.)*

4 вулакан: Мирлӗ ӗҫ умӗнче, ӑмӑрту кунӗнче,
Пӗр-пӗрне ӑнӑҫу пиллесе,




# Çирĕп миршĕн

## (Литературăпа музыка композицийĕ)

1 вулакан: Çу пуçламăш! Май пĕрремĕш кунĕ!
Ăшăтать хĕвел те хĕрӳрех.
Таврана уяв хитре тĕс кӳнĕ:
Ялавсем çунаç кăвар пекех. *(В. Иванов.)*

2 вулакан: Çитрĕ Аслă уяв! Чун туртать, чун чĕнет
Шав-шавлан, кĕр-кĕрлен, ян-янран урама.
*(У. Мишши.)*

3 вулакан: Çулпуçсен сăнĕсем, плакатсем, чĕнӳсем...
Чӳхенет, варкăшать ĕç ялавĕ...
Телейпе çиçекен чăлтăрти куçсенче
Курăнать чăн-чăн халăх уявĕ. *(А. Канаш.)*

4 вулакан: Паян уяв — хĕвеллĕ майăн кунĕ,
Çĕршывăмри хăватлă çуркунне.
Паянхи кун эпир мĕльюн-мĕльюнăн
Пĕрле тăрса виçетпĕр вăйсене.



# Çук, манмастпăр эпир вĕсене нихăçан!

(Вăрçăра вилнисене асăнса)

1 пионер: Паян — праçник, паян — уяв:
Хумхан та варкăш, хум ялав!
Паян — чи çутă, аслă кун:
Пурте: Эпир çĕнтернĕ чаплă кун! *(С. Шавли.)*
2 пионер: Кĕрле мухтавлăн, Çĕнтерӳ салючĕ,
Паян эс илтĕн пĕтĕм тĕнчене.
Ан астăр нихçан та вăрçă вучĕ,
Çич ют ан тивтĕр кăкăр ачине! —
*(Г. Ефимов.)*
3 пионер: Çĕнтерӳ! Тăхланпа хурçă айĕн пĕр шиксĕр
Вăл çул тытрĕ Берлин таврине.
Ĕçпе мир ялавне çулăм витĕр
Вăл хăпартрĕ рейхстаг тăррине.
*(П. Хусанкай.)*



# Çамрӑк ленинецсем

## (Литератураӑпа музыка композицийӗ)

1 пионер: Эпир çамрӑк ленинецсем,—
Çӗршывӑн хастар ачисем.
Ҫалатпӑр сире кӑмӑлтан

Пурте: Пионерла салам!

2 пионер: Пионер! Пирӗн çул малалла,—
Нихӑçан та ларман, ларас çук пуç усса,
Хӗрлӗ галстук мӑйра тӑнӑ чух ялкӑшса.
*(А. Галкин.)*

3 пионер: Салам, мухтавлӑ Пионери!
Малти тени — çак ырӑ ят.
Çӗршыв сана савса пиллерӗ
Ӳссе этем пулма хӑват. *(А. Воробьев.)*

4 пионер: Пионер! Пул эс паттӑр,
Ут хӑюллӑн малалла!
Пионер! Пионер! Кунран-кун тӑрӑшса
вӗренер!